# БУКВАРЬ для ЧУВАШЪ

## СЪ ПРИСОЕДИНЕНІЕМЪ РУССКОЙ АЗБУКИ

для совмѣстнаго обученія

## ЧТЕНІЮ и ПИСЬМУ.

---

### Ҷăваш ҫыруне вĕренмелли кĕнеке.

---

СЪ РИСУНКАМИ И ОБРАЗЦАМИ ПИСЬМА.

I

XVIII — 3884

СИМБИРСКЪ
Типо-Литогр. Губер. Исполнительнаго
Комитета.
1917.

Отъ Переводческой Коммиссіи Православнаго Миссіонерскаго Общества печатать разрѣшается. Казань. 1916 года, августа 25 дня.

Предсѣдатель Переводческой Коммиссіи, профессоръ ИМПЕРАТОРСКОЙ Казанской Духовной Академіи *М. Машановъ*.

## Письменныя упражненія до букваря.





# а н





*а н ан ана а*

# у

*у уна ну*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ан | на | на | ну |
| ун | а на | у на | а ну |



# ш

*ш аш уш*

| | | | |
|---|---|---|---|
| аш | ша | шу | шан |
| уш | а ша | а шу | ша на |



# р

*р р ура*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ар | ра | ру | а нар |
| ур | а ра | у ру | у нар |

*ура, ара, анар, унар.*



# Ыы




| | | | |
|---|---|---|---|
| ыш | ы ра | шы | ыр |
| ыр | ы ран | шы ра | ыра |
| ын | ы раш | шы рар | ыраш |

*Ыран шыра. Ыра ыр.*



# Лл




| | | | |
|---|---|---|---|
| ал | шал | ул | ша ла |
| а ла | ша ла | у ла | ла ша |
| а лар | ша лу | у лар | ла рар |

Лаша. Лар. Ан ула. Ыран алар. Шала лар.

*Лаша ула. Ыран алар.*



# М м




| | | | |
|---|---|---|---|
| ам | а нам | ман | мул |
| а ма | у нам | ма на | му ла |
| а ман | у рам | ма нам | ла рам |

Ан ман. Мана ан ман. Ан аман. Мала лар. Мана шан.

*Ан аман. Мана ан шыра.*



# В в




| | | | |
|---|---|---|---|
| ав | ыв | вар | ву |
| шав | шыв | а вар | ву ла |
| лав | шы ва | а вал | выр |

Ан ав. Аван лаша. Шыв шыра. Ыраш выр. Вулама лар. Аван шыв. Ыран вырар.

*Вула. Аван лар. Ыраш выр.*



# Сс

*с с сав, ас.*
*Сана, сан.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ас | са на | ма нас | са рас |
| сас | са ва | су нас | са рар |
| а сас | са вас | су рас | са рам |
| у сас | а вас | сы рас | са лам |

Ан ас. Ура сыр. Сана салам. Усал ан сун. Шыва ан сур.

*Сана салам. Ан сур. Усал ан сун.*



# Хх

*х х хуха,*
*Хал, ахал.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ах | хал | ху ха | хы вас |
| ух | са хал | ху са | хы рас |
| су ха | хур | ху ран | ху ра ма |
| су хал | хул | ху рал | су ха ра |

Хусан. Хуран хура. Аван хула. Сахара сухан сахал.

*Хура сухал. Хусан аван хула.*



*п пыл, хып,*
*Пуса, упа.*

# Пп

| | | | |
|---|---|---|---|
| уп | сып | пас | пур |
| хуп | хып | па сар | пыр |
| суп | хы пас | пу хар | пыл |

*Пура пура. Пуса сар. Шыв сып.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| у па | па сар | пу са | пыр |
| ху пах | па ман | пу ра | хын |
| ху пар | па лан | пу хас | хы пар |

**Ыран пасар. Пасара пыр. Пура пурар. Палан пухар. Лашана хуп.**

*Палан пух. Пасара пыр. Пыл пар.*



*т така.*
*Пуҫ тар.*

# Тт

| | | | |
|---|---|---|---|
| ут | у тар | та та | та тар |
| сут | ху тас | ту та | ты тар |
| ват | су тас | та са | ту тар |
| вут | а тас | ту са | ту рат |
| хут | а таш | ту сан | ту пас |

**Ват тутар. Тус пулар. Аван апат. Тула тухар. Тарас, вула. Тупа ан ту. Ман пата пыр. Таса шыв аван.**

*Апат пар. Тула тухар. Тус пулар.*



**Т̆ т̆**

*т̆ т̆ ат̆а,*
*Т̆ыха, ат̆.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ат̆ | у хат̆ | та рат̆ | На т̆а |
| у лат̆ | у тат̆ | са рат̆ | а т̆а |
| ву лат̆ | а тат̆ | су рат̆ | т̆ы ха |

**Лаша атат̆. Нат̆а вулат̆. Лаша тапат̆. Тарас пура пурат̆. Апат аван анат̆. Сахар ура сырат̆. Тутар т̆ыха сутат̆. Тусан пырат̆.**

*Лаша тапат̆. Нат̆а вулат̆. Хура т̆ыха.*



**К к**

*к ку, хак,*
*Курка, К*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ак | сак | па так | та ка |
| хак | вак | пу рак | а ка |

| | | | |
|---|---|---|---|
| кат | ка ла | кан | Кур |
| кас | ка лак | кун | ку рак |
| кар | ка рас | кул | ку шак |

Хура така. Лаша акара. Кусар мука. Хура курак. Сана курас. Аҫта, Макар, аната.

| | | | |
|---|---|---|---|
| а на | ту ра | ву та | а са |
| Ан на | Тур ра | вут та | ас са |
| а ла | пу ра | ват та | ху ша |
| ал ла | пур ра | ап па | хуш ша |

Атта туп. Пусса ан сур. Ватта ырра хур. Турра ан ман. Асса ан лар. Анна аппа ыраш аллаҫ. Кукка, пасара пыр.

*Кусар мука. Хура така. Анна вулаҫ. Рак.*






# Ăă

| | | | |
|---|---|---|---|
| ăн | ăс | у сă | пу шă |
| ă на | ă са | пу сă | ху шă |
| ă наҫ | ă саҫ | пу лă | ă шă |

*Пушă. Пусă. Усă. Ăс. Ăн.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| пу лă | пă ра | тă ван | сă рă |
| су лă | сă ра | тă вар | тă рă |
| ту лă | хă на | тă кар | вă рă |
| Ту рă | шă на | кă кар | вă кăр |
| ты рă | хă ла | кă кăр | тă кăр |
| ты лă | тă ла | су хăр | сă тăр |

Шурă пăтă. Пысăк пулă. Хăла тăла. Тăрă шыв. Хытă тăм. Сывă пул. Аван пурăн. Турăран хăра.

Ăса Турă парать. Сăтăр ан тăвăр. Лаша хытă утать. Турăх тутă тытать. Пулас лаша ўтыхаран пallă.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ул ма | сăп ка | хур са | каш та |
| сал ма | сăп са | хут ма | каш ла |
| сар ма | тăк са | сут ма | кăк ла |
| кар та | тух са | сăх ман | хăм ла |
| кал та | пух са | сых лан | хур ла |

Сăпка тăвар. Сăпса хытă сăхать. Вут хутма тăр. Ыраш пулнă, вырас пулать, Сана салма, мана улма. Вăрманта кашкăр пур. Атă, купăста шăварма. Ула лаша тамаша, ака тăвать хашкаса. Улăхра курăк аван.

*Сăпса сăхать. Вут хутма тăр.*



# Ии




| | | | |
|---|---|---|---|
| ил | хир | кил | пир |
| иш | вир | кин | пит |
| ир | тир | тин | шит |

**Улăх ути аван. Макарăн ури шăннă. Аттă, Иван, вир вырма. Вир пăтти пит тутлă. Симукан атти пысăк.**

*Сарă тир. Иван вырттат. Улăх ути.*



# Ее




| | | | |
|---|---|---|---|
| е сир | ви те | и лес | ер не |
| е пир | хир те | и рес | леш не |
| е тем | сир те | и шер | сер те |
| е рех | и лет | си сер | вит ре |
| пи ре | ки лет | пи сес | ат те |
| си ре | ти рет | хи рес | ан не |

Анне ир тăрат̆. Хурсем шывра ларнă. Есир вир вырнă, епир хир курнă. Ир тăракан тутă пулнă тет. Атте ыраш сăвăрат̆. Хирте апат тутлă. Сысна хырăмне ыраш пăсман тет. Павăл упа курнă тет.

*Хирте аван. Ерешмен карти. Сире салам.*



Ç ç




| | | | |
|---|---|---|---|
| уç | ça нă | çы ран | çул |
| нуç | ça ра | çу ран | сул |
| куç | çу ра | çе çен | çар |
| каç | çур хах | çем çе | сар |
| лаç | çур та | çăм ха | ка çар |
| ка лаç | çу рăк | çăр ха | ка сар |
| ка çас | çу рăм | шăр ça | ça ва |
| а ça | çу лăм | пăр ça | са ва |

Çыру çыр. Çара çуна лашана çăмăл. Çумăр çăват̆, аçа çапат̆. Аппа çăпати пит хитре. Çерем уçрăм, вир акрăм, ăна вырма çын тытрăм. Тухман çын тухсан, тăман тухнă тет.

*Çыру çыр. Тăлăх çын. Çула ăшă пулат̆.*



# Ĕ ĕ

*ĕ ĕ ĕмĕт,*
*Ĕне, ĕç, çĕр.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ĕ ç | ĕ мĕт | çĕ рĕ | вĕ рет |
| ĕм | ĕ лĕк | çĕ нĕ | кĕ лет |
| ĕн | çĕ лĕк | тĕ нĕ | сĕ тел |
| ĕ не | сĕ лĕ | тĕ рĕ | хĕç |
| ĕ нер | ти лĕ | çĕ рĕ | хĕс |
| ĕ нен | си вĕ | çĕ рĕн | хĕр |

*Çĕрĕ. Çĕçĕ. Епĕ. Ĕлĕк. Ĕмĕр. Тĕрĕ. Вĕр.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| хĕн | кĕр | кĕ ве | пĕ çер |
| хĕ не | кĕ рĕ | пĕ ве | пĕ çĕ |
| ĕ нер | кĕ рес | пĕ вер | пи çĕр |
| çĕ мĕр | кĕ реке | пĕ кĕ | кĕс ке |
| çĕмĕрт | кĕ ре çе | кĕ пе | ĕç кĕ |

Есĕ те çын, епĕ те çын. Хĕрлĕ ĕне пит сĕкĕшет. Çĕрĕк çăпата. Кĕрпе пулсан, пăтă пиçет. Кĕтĕм кĕрекене, лартăм сĕтел хушшине. Ута çулаççĕ, тырра выраççĕ. Шыва кĕтĕм, тасалтăм, хĕрлĕ кĕпе тăхăнтăм. Тиркекене тирĕк тĕпĕ тивнĕ тет.

*Кăçал хĕл сивĕ. Ĕне сĕкĕшет. Ĕмĕр иртет.*



# Ӳ ӳ

*ӳ тӳрӗ,*
*Ӳпре, ӳс*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ӳ х ӗ | | кӗ рӳ | ӳ лет |
| ӳт | тӳ | кӗ тӳ | у лат̆ |
| ӳс | тӳс | пӳ ре | ӳ сӗр |
| ӳ сӗр | тӳ ре | пӳл ме | у сӑр |
| ӳ кӗр | тӳ ме | ӳк ме | тӳс |
| ӳ кӗт | кӳ ме | ӳк рӗ | тус |
| ӳ кет | хӳ ме | пӳк нӗ | пӳ ре |
| ӳ лӗм | хӳ ре | сӳт нӗ | пу ра |
| ӳ кӗн | сӳ ре | хӗ рӳ | сӳ рер |
| ӳп ре | ҫӳ ҫе | хӗр хӳ | су рар |

Турӑ ӳркенме хушман. Ӳпренӗн ӗмӗрӗ икӗ ерне. Нӳхрепре сивӗ. Лаша кӳлме тӑрсан та, Турра асӑн. Кӳлӗри шыв шӑрӑшлӑ. Ҫӳҫ вӑрӑм та, ӑс кӗске. Ҫыру вӗренме ан ӳркен. Вӑрманта ӳхӗ кӑшкӑрат̆. Тӳпеми пар.

*Тилӗ хӳри. Ӳхӗ кӑшкӑрат̆. Ӳкӗтлӗ пул.*



# Ђ ђ



| | | | |
|---|---|---|---|
| ђан | ђă хă | ђу кун | пă ђă |
| ђар | ђă лан | ту кун | пă тă |
| ђун | ђă лах | ђу ман | ђĕ рĕ |
| ђул | ђă ваш | ту ман | тĕ рĕ |
| ђу ра | ђă рăш | ђă рăш | а ђаш |
| ђĕн | пă ђă | тă рăш | а таш |
| ђĕр | пă ђă кă | тир | а ŭа |
| ђĕ-ре | ђĕл хе | ђир | а ђа |
| ђĕ лĕ | ђĕл пĕр | тун | ку ђан |
| ђĕ пĕ | ђĕн тĕр | ђун | кун тан |

Ађаш ађа. Улађа кĕпе. Пăђăр ашĕ тутлă. Ӳт ђĕлхенĕн шăмми çук. Епир çиђђĕн пĕр тăван. Пахђара мунђа лараŭ. Пĕђĕкçĕ хуранăн пăтти тутлă. Ђакакăн мĕн пур сăвви те пĕрре анђах. Тăваттăн авăн çапма аван, иккĕн икерђĕ çиме аван.

*Ђуман лаша. Ађаш ађа. Ђакак ђĕппи.*

## Ԓ

*ԓ ахаԓ, выԓа.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ку ԓа | а хаԓ | Па ԓа | У ԓа |
| вы ԓа | ку кăԓ | Па ԓук | у ла |
| Пу ԓа | мă кăԓ | Ку ԓук | куԓ ԓан |

Ахаԓ ан тăр. Выԓас килсен, тула тух. Михаԓпа Иԓуш лашалла выԓаççĕ. Ăшă кукăԓ çиме тутлă. Куԓа выԓат̆. Аԓтук ташлат̆. Маԓԓа карҭăк çум çумлат̆. Выԓарăм, култăм, утă çултăм, çырла çеçки пуррине пĕлмерĕм.

*Ăшă кукăԓ тутлă. Епир лашалла выԓарăмăр.*

## Ӈ

*ӈ ӈ мăкăӈ*

| | | |
|---|---|---|
| ху ӈа ма | ху ӈа кам | мă кăӈ |
| ху ӈа ça | ху ӈăм | су пăӈ |

Мăкăӈ ҭеҭекĕ илемлĕ. Манăн хуӈăм хытă çын. Хуӈамана йурасси çăмăл ĕç мар вăл. Тăрна кусĕ пек шыв выртат̆, ман хуӈакам пир илет.



# Йй




| | | | |
|---|---|---|---|
| ай | йал | йур | йы тă |
| пай | йа лан | йул | йы вăç |
| май ра | йа ка | йух | йы вăр |
| сай ра | су йа | йут | йых рав |
| кай ра | па йан | йу рă | йы шăн |
| уй | пу йан | йу ман | йыш лă |
| туй | ха йар | йу мах | йыс на |
| суй ла | хă йар | йул хав | хăй ма |
| май | йа рас | йул таш | Йах вар |
| хăй ра | йат лас | йус ман | Йа кур |

*Сайра. Туй. Хăйма. Йал. Йурă.*

Пайан йур çăват̆. Йатман̧ пиђђе йат сарат̆. Йумах йуман тăрринђе. Йытă вĕрет, йан кайат̆. Тарăн варта йур пур тет, йур варринђе пăр пур тет.

| | | | |
|---|---|---|---|
| йăх | йă ла | йер | йе шĕл |
| йăт | хă йă | йен | ти йе |
| йă ла | хă йăр | йеп ле | ђи йе |
| йă ва | мă йăр | йен ђĕк | ђе йе |

| | | | |
|---|---|---|---|
| йӳн | йӳ ле | йӗс | йӗ рӗх |
| йӳ ҫӗ | йӳн лӗ | йӗм | йӗ кӗр |
| йӳ ҫет | йӳн сӗр | йӗр | йӗ пе |
| йӳ рек | йӳҫен кӗ | йӗр ке | йӗп лӗ |

Майра мӑйӑра кайнӑ тет. Ђийе ҫырли йӳҫенкӗ. Йӗнерђӗк лаша ҫийӗнђе. Йӗкӗреш хӑраххи йӗрсе лараҭ.

*Мӑйӑр тӗшӗ тутлӑ. Ђуста йӳҫет. Йӗкӗреш хӑраххи йӗрсе лараҭ.*

---

Йалан ӑспа ҫӳресен, йалти ватӑ йатламасҭ. Йулхава йалан уйав. Ватта туйа кирлӗ, пӗђӗкҫӗ ађана сӑпка кирлӗ. Икӗ кайӑка хӑвалакан пӗрне те тытайман тет. Вӑтанман йумӑҫ пулнӑ тет, ӳркенмен ӑста пулнӑ тет. Пысӑк сӑмах калиђђен, пысӑк ђӗлӗ ҫӑкӑр тыт. Пӗр кун кайас тесессӗн, ҫиђӗ кунлӑх ҫӑкӑр ил, теҫҫӗ. Вӑйӑран вӑкӑр тухаҭ. Ҫамрӑкла вӗренеймесессӗн, ватӑлсан вӗренме хӗн вара. Ҫынтан вӑтанмасассӑн, Турӑран хӑрамасассӑн, пархатар курайман, теҫҫӗ ваттисем.

Урпа утмӑл кунта кӗрекене лараҭ, теҫҫӗ. Кӑвакал кӳллине кура ђӑмаҭ. Аптӑранӑ кӑвакал кутӑн ђӑмаҭ тет. Кирлӗ мар катӑк пуртӑ та ӗмӗрте кирлӗ пулнӑ тет. Ватӑ ҫерҫийе хывӑхпа улталайман. Килте йытӑ пӑтратма пӗлмен—йалта йашка пӗҫернӗ тет. Вӗлле хурђӗ пӗђђен нумайах пыл тӑваймӗ. Хытӑ ҫынтан хӗл варринђе те пӑр катӑкӗ ыйтса илей-

мĕн. Саншăн кашкăр та тутă пултăрҫĕ, сурăх та тĕрĕс тăтăрҫĕ, теҫҫĕ хытă ҫынна. Тухман ҫын-тухсан, тăман тухнă тет. Ҫиҫесси ҫăмăл та, ĕҫлесси йывăр. Ир тăракан тутă пулнă тет. Ута пăхакан—ҫуран йулман, ватта пăхакан—выҫă ҫӳремен, теҫҫĕ. Ҫапа пĕлменĕн пуши хăйне ҫаврăнса тивнĕ тет. Туман тыхаиăн пилĕкне ан хуҫ, теҫҫĕ. Аш пулсан, хуплу тăвăттăм, ҫăнăх ҫук, тесе каларĕ тет ĕлĕк пĕри. Пĕрре улталăн, иккĕ те улталăн, виҫҫĕмĕшĕнҫе макăрăн та вара, теҫҫĕ. Выҫсан ҫăкăр та тутлă, тăрансан пыл та йӳҫĕ. Ҫу иртсен ҫырлана ҫӳремеҫҫĕ. Ҫăкăр хырăма шырамасть. Ҫын аллинҫи кукăль пысăккăн курăннă тет. Пырна пула пуҫна ҫийĕн, теҫҫĕ. Нумайа хапсăнакан нимĕнсĕрех йулнă тет. Ахаль тăриҫҫен кĕрĕк аркине те пулин йăвала, теҫҫĕ. Пĕҫҫен автан ашĕ ҫиме анҫах аван. теҫҫĕ. Йытă мăнтăр та, ҫиме йурамасть.

(-). Ҫăкăр-тăвар пулсан, хура вырăс та хурăнташ. Пир-авăр тăвасси хĕр-арăм ĕҫĕ. Тăйлăк-тайлăк кусакан урапа шанҫăксăр. Алă-ура пур ҫинҫе, ахаль ларни ҫылăх.

(!). Кĕрсе кай! Пырса лар! Иртнĕ-ҫӳренĕ ҫух кĕрсе тух! Ах, Турă, савăнтăм! Вăшт! анҫах турĕ: курса та йулаймарăм! Пулас ҫын ҫамрăкранах паллă: ав Ильуш йепле! халех ватă ҫын пек йĕркелĕ калаҫать! Ăста ҫын ăстах: ĕҫе тытнă, тунă, пăрахнă!

(?). Кам есӗ? Есӗ ђӑваш-и, тутар-и? Мӗн йатлӑ? Санӑн аҫу-аннӳ пур-и? Есир миҫенӗн пӗр тӑван? Санран аслӑ ывӑлсем, йе хӗрсем пур-и? Санран кӗҫӗннисем миҫе? Есӗ тӑванусене ху мӗн вӗреннине каласа кӑтартатӑн-и? Есӗ килте мӗн тӑватӑн? Ҫӑпата тума пӗлетӗн-и? Ҫӑпатана миҫе пушӑтран тӑваҫҫӗ? Ҫӑпата тума йывӑр-и, хуṭ вӗренме-и? Санӑн пӗлмен ӗҫе вӗренессӳ килет-и? Сирӗн миҫе лаша? Ӗне тата пӗрре-и, иккӗ-и? Пӗр йенӗ хир, тепӗр йенѐ вӑрман,—мӗн вӑл? Хӑш йывӑҫ сирӗпрех: ҫӑка-и, йуман-и?

---

**ЂӐВАШЛА САС ПАЛЛИСЕМ:**

Аа Нн Уу Шш Рр Ыы Лл Мм Вв Сс Хх Пп Тт ṭ Кк Ӑӑ Ии Ее Ҫҫ Ӗӗ Ӳӳ Ђђ Йй ԓ ԋ

1 2 3 4 5 6 7 8 9 0

*Алӑпа ҫырнӑ сас паллисем:*



Варука аппăшĕ пыл панă. Варук пылне хăй çимен, Симукпа Микулайа панă. Вĕсем сăвăннă.

Кĕтернене амăшĕ супăӈ илсе панă. Вăл питне те, мăйне те супăӈпе çунă. Унăн пиҫĕ те, мăйĕ те, аллисем те тап-таса пулнă.

Амăшĕ пăтă çинĕ. Маруç ун арки çине пырса ларнă. Амăшĕ ăна пăтă çитернĕ. Маруçăн алли çине шăна пырса ларнă. Маруç шăнана пăтă панă. Амăшĕ те çинĕ, Маруçĕ те çинĕ, шăни те çинĕ, пур те тăраннă.

Петĕрпе Иванăн выҫасси килнĕ. Вĕсем сурăхсем пулнă та, пĕр пĕрне çамкапа сĕкме тытăннă. Вăййи наҫар пулнă: Иванăн çамки мăкăрăлса тухнă, Петĕрин куçĕ кăвакарса кайнă.

Пĕр тутар çывăрма выртнă тет. Çывăрсан çывăрсан, ăйхă тĕлĕшĕпе кĕмсĕрт! туса ўкрĕ тет.

Икĕ каҫака сĕкĕшме тапратрĕç тет. Сĕкĕшрĕç сĕкĕшрĕç тет те, пĕри мăйракине хуçрĕ пăрахрĕ тет.

Епир аҫасемпе лашалла выҫарăмăр. Иван сынни пулҫĕ, епĕ лаши пултăм. Мана Иван пушăпа çапрĕ те, манăн ыратрĕ: кăштах макăрса йамарăм.

Епĕ пĕҫĕкçĕ ҫух, çула пулсан, хăва çулçисене пухса кивĕ çăпата çине тултараттăм та: пулă сутаť, пулă! тесе, тек туртса çўреттĕм.

Пирĕн йупах ťыха хĕлле пит наҫарҫĕ;

çуркунне Атăл йăлăмне кайса йатăмăр та, йăптăхне тăкнă, çап-çутă, йап-йака, çĕлен пек пулса килђĕ.

Пирĕн асатте пĕрре тутара: çиме лар, тесе каларăм тет. Тутар пĕр ђĕнмесĕр сĕтел хушшине кĕрсе ларђĕ тет те, мĕн пур йашкана хăйех çисе йађĕ тет.

Епĕ пĕђĕкçĕ ђухне сĕтел хушшине ларсан, йаланах урана сулласа лараттăм. Анне мана: ђипер лар, уруна ан сулла, амăшĕ вилет тет апла! тетђĕ.

Пĕр арăм çулпа утса пынă. Унăн инçе каймалла пулнă. Кайсан кайсан, вăл ывăннă. Вара вăл выртнă та çывăрнă. Çывăрсан ăна вăй кĕнĕ те, вăл хăй кайас тенĕ çĕре ђасах çитнĕ.

Пĕрре епĕ çулпа пыраттăм. Сасартăк мана хирĕç вăрмантан икĕ кашкăр сикрĕç тухрĕç. Епĕ тем пек хăраса ӳкрĕм. Çывăхра пĕр йывăç лараĭђĕ. Епĕ пĕр самантра çав йывăç çине хăпарса кайрăм. Кашкăрсем иртсе кайсассăн, епĕ антăм та, малалла утрăм.

Михаљапа Куçма пасара кайаççĕ тет. Амăшĕ: ађамсем, ман валли çип илсе килĕр-ха, акă мейĕр укçа, тесе калаĭ тет. Михаљи укçине илђĕ тет те, пасара çитсенех кулаç илсе çирĕ тет.

Наçтук çыру вĕренсе килне таврăннă. Килĕнђе амăшĕ анђах пулнă. Наçтук сĕтел хушшине ларнă та, кĕнеке илсе, амăшне пĕр халлап вуласа кăтартнă. Амăшĕ савăнса итлесе ларнă.

Тап-таса карташ варринђе пěр купа хăйăр пулнă. Ађасем карташне тухнă та, хăйăрпа выљама тытăннă. Вěсем хăйăра илсе, пěђěкçеççě купасем туса çӳренě. Камăн купи çӳлěрех тесе тавлашнă вěсем.

Хурсем шыва аннă. Вěсем шыва кěрсен, шыв вěсен патěнђен ункă пула пула хумханса кайнă. Кăшт тăрсан, шыв каллех йап-йака пулса тăнă. Шывě тăп-тăрă пулнă. Хурсен урисем курăнса пынă.

Иван хире ашшě патне çăкăр леçме кайнă. Çул çинђе унăн çывăрасси килнě. Вăл хăва айне выртнă-та, çывăрах кайнă. Хураçка пынă та, çăкăрне çисе йанă.

Хураçка кěпер урлă каçса пынă. Çăварěнђе шăмă пулнă. Пăхат, шывра унăн мěлки курăнат, унăн та çăварěнђе шăмă пур. Туртса илес тесе, Хураçка шыва сикет. Лешинне те илеймест, хăйěн те шыва путат.

Петěрпе Марук Наçтук патне хăнана пынă тет. Вěсем пахђана кайса, çатан çумне ларнă тет. Наçтукě çăкăр ђěлли çине çу сěрсе пынă тет. Йурла йурла çисе лараççě тет.

Кушак пӳрт тăррине улăхрě. Вăл урисене хутласа выртрě те, çывăрса кайрě. Çěрçи вěçсе пыђě те, ун патнех ларђě. Ан лар унта, çерçи, темěн курăн, кушаксем пит ђейе вěсем.

Çуркунне çитсе килет. Хěвел çěре хытăран хытă ăшăтат. Йур ирěлет, шыв йухат. Кăђăкă та папка кăлара пуçларě. Ăшă йенђен вěçен-кайăксем вěçсе килеççě. Сынсем пурте савăннă.

**Аҫасем** улăха выҫама кайнă. Улăхра вĕсем турпас татăкĕсем тупнă. Ҫав турпас татăкĕсене купаласа, вĕсем пӳрт тунă. Малтан пурине тунă, унтан тăррине тунă. Пӳртин мăрйи те, алăкĕ те пулнă. Пӳрҫĕ аслă пулнă, анҫах алăкĕ пĕҫĕкҫĕрех пулнă. Пуканисем нийепле те алăкĕнҫен кĕреймен. Вара аҫасем пӳрҫĕ тăррине илнĕ те, пуканисене ҫӳлтен пӳртне кӳртсе лартнă.

**Пĕр** арăм витрепе шыв ăсса пырат тет. Витри шăтăк пулнă тет. Шывĕ йухса сахалланипе кунăн витри ҫăмăлланҫĕ тет. Арăмĕ: витре ҫăмăлланҫĕ-ха тесе савăнса пырат тет. Килне пырсан, пăхат тет: витринҫе шывĕ пĕр тумлам та йулман тет.

**Епир** пĕрре ҫикĕри ана ҫинҫе тулă выратпăр. Епĕ кĕлте ҫыхрăм та, ăна тĕм ҫине леҫсе хутăм; ҫав вăхăтра ҫурлана таҫта ҫухатрăм. Пăхкалатăп пăхкалатăп—ҫук. Ҫурлана пиҫҫе тупнă та, каламасăр тăрат. Атте уншăн ҫиленҫĕ те, йатла пуҫларĕ: ĕҫ патĕнҫе выҫамаҫҫĕ, апла ĕҫ йулат! терĕ. Мана тата: кĕлте ҫыхнă ҫухне ҫурлана хул-пуҫҫи ҫине хураҫҫĕ, терĕ.

**Асламăшĕпе** пĕҫĕк хĕрĕ пурăннă. Хĕрĕ йалан ҫывăрнă. Асламăшĕ пĕр май ĕҫленĕ: ҫăкăр пĕҫернĕ, урай шăлнă, ҫĕленĕ, авăрланă, пир тĕртнĕ. Пурăна киле хĕрĕ пысăкланнă, асламăшĕ ватăлнă. Асламăшĕ ҫӳреймн, ĕҫлейми пулнă. Хĕрĕ пур ĕҫе те хăй туса тăнă: вăл пĕҫернĕ, ҫунă, ҫĕленĕ, тĕртнĕ.

**Пĕр** ирхине Катуҫпа Маруҫ вăрмана кăмпана кайнă. Маруҫ пĕҫĕкҫĕ пулнă. Вĕсенĕн вăрмана пĕр пĕҫĕкҫĕ ҫырма урлă каҫса каймалла пулнă. Катуҫ ҫăлхине хывнă та, Маруҫа ҫӳрăм хыҫне ҫакса, шыв урлă каҫара пуҫланă.—Маруҫ, авантарах лар, мана мăйран ан пу! Аллусене ил. мана сывалма йывăр, тенĕ Катуҫĕ. Ҫапла Катуҫ Маруҫа шыв урлă йатса каҫарнă вара.

**Епĕ** пĕрре, пĕҫĕкҫĕ ҫухне, урампа пĕҫҫенех иртсе пыраттăм. Мана пĕр усал аҫа тĕл пулҫĕ те, сулахай аллипе ҫупрĕ йаҫĕ. Епĕ йĕрсе йатăм та: ак аннене калам-ха, терĕм. Вăл кула пуҫларĕ: каласан та, каламасан та нимĕн те тăвас ҫук, сулахайа сут ҫук, терĕ.

**Аҫасем** пĕве хĕрринҫе выҫанă. Вĕсем шывра шапасем ларнине курнă. Вĕтĕ ҫул пуҫтарнă та, шапасене ҫулпа пере пуҫланă.

Пĕр шапи кăшт пуҫне кăларҫĕ тет те, аҫасене াкаларĕ тет:
— Ҫарăнăр, аҫасем, ăн перĕр: сире вăйă та, пире вилĕм, терĕ тет.

**Шăшисем** хирте пĕр пĕве патĕнҫе пурăннă. Ҫуркунне пулнă та, шывсем сарăлса йуха пуҫланă. Вара шăшисем пĕр ту ҫине кайнă. Ту ҫинҫе тилĕ пурăннă. Шăшисене курсан, тилĕ тем пек савăннă. Вăл вĕсене пурне те ҫисе йанă. Хăй вара мăнтăрланса кайнă.

**Хĕлле** пулнă. Ҫанталăк ăшă тăнă. Вăл ҫул йур нумай пулнă. Аҫасем пĕве ҫине кайнă та, йуртан ҫын тăва пуҫланă. Хăйсен аллисем шăннă. Вĕсем ҫапах та ҫыннине туса пĕтерне. Ҫынни пит аван пулнă. Ун ҫăварне ҫĕлĕм хыптарнă, куҫĕсене кăмрăкран тунă. Аҫасем йур кĕлетке ҫине пăхса, савăнса тăнă.

**Аҫасем** курăк ăшĕнҫе ҫĕрĕп тупнă. Ваҫҫук ăна килне йăтса кайасшăн пулнă. Анҫах йăтма нимĕнле май пулман: ҫĕрĕпĕн йĕпĕсем ҫикнĕ. Вара аҫасем ҫĕрĕпе ҫĕлĕк ăшне хурса, илсе кайасшăн пулнă. Анҫах ҫĕлĕкĕ пĕҫĕкҫĕ пулнă. Ҫапла вара ҫĕрĕпе нийепле те илсе кайайман.

**Хураҫка** йатлă йыттăн ҫурисем пулнă. Вĕсем карташĕнҫе утă ҫинҫе выртнă. Пĕрре Хураҫка таҫта тухса кайнă. Аҫасем пынă та, пĕр ҫурине пурте илсе кĕнĕ. Хураҫка таврăнсан, йăнăшса вĕре пуҫланă. Аҫасем йытă ҫурине илнĕ те, амăшне панă. Амăшĕ ăна ҫăварĕпе хыпса карташне илсе тухнă.

**Пĕр** ҫын пит ватăлса ҫитнĕ. Пĕрре вăл кăмака ҫине улăхасшăн пулнă, анҫах нийепле те улăхайман. Вăл вăхăтра пӳртре аҫийĕн аҫи ларнă. Вăл аслашшĕнҫен кула пуҫланă. Аслашшĕ каланă: аҫам, есĕ намăса пĕл! Аслаҫу кăмака ҫине улăхайманни кулăшла мар, есĕ ухмаххи кулăшла, тенĕ.

**Пĕрре** Михалҫа вăрмана кайнă. Вăрманта вăл йуман айĕнҫе кăмпа курнă. Кăмпи ватă пулнă, ăна никам та татман. Михалҫа ăнакăна пăхмасăр кăмпана татнă та, килне илсе кайнă. Килне пырсан: акă епĕ йепле аван кăмпа татрăм, тенĕ. Кăмпи унăн ҫĕрĕк пулнă, ăна никам та ҫийекен пулман.

**Сашук** пит хăравҫă пулнă. Пĕрре аслати авăтса ҫумăр ҫунă. Сашук хăранипе шкапа кĕрсе ларнă. Шкапра тĕттĕм пулнă, сывлама та йывăр пулнă, аслати сасси илтĕнмен. Ҫавăнпа вăл ҫумăр ҫуса иртсе кайсан та, шкапра темĕнҫен ларнă. Ҫав кирлĕ сана, Сашук! Ӳлĕмрен аслатирен ан хăра.

**Пирĕн** вăкăр пурҫĕ. Вăл пит усалҫĕ. Ун патĕнҫен иртсе кайма пур те хăраҫҫĕҫ. Пĕрре ҫапла асатте ăна кĕтĕве хăваласа кайаҫ. Вăл асаттене хирĕҫ тăҫĕ те, сĕксе йăвантарса йа-

ҫӗ, хӑй айне тӗркелесе ҫикрӗ. Ҫынсем вӑкӑра хуса йаҫӗҫ те асаттене киле илсе пыҫӗҫ. Ҫавӑнтан кайран асатте нумай пурӑнаймарӗ вара,—вилҫӗ. Асатте вилсен, вӑкӑра аслӑк айне илсе кайрӗҫ те, пусса пӑрахрӗҫ.

**Пӗр** арӑмӑн пит турӑх ҫийесси килнӗ тет. Ӗни хӗсӗр тет кунӑн, сӗт памасӗ тет. Кӑшт та пулин ҫапах сӗт памӗ-ши тесе, кайаӗ тет ку картана. Ӗни выртнӑ тет. Хӑпӑл-хапӑл илет тет курка та, ҫупаӗ тет кӳршӗ армӗ патне.—Акка! ӗне пӑрулама выртнӑ, кӗвелӗк парса йар-ха мана, тесе ыйтаӗ тет.—Вара, те пӑрулама выртнӑ халӗ вӑл, те ахалҫ выртнӑ? тесе каларӗ тет лешӗ.—Ӑна-кӑна пӗлмерӗм те халҫ епӗ, тесе тухса кайрӗ тет хӑй арӑм.—Туман ӗыханӑн пилӗкне ан хуҫ, теҫҫӗ ҫав.

**Амӑшӗпе** хӗрӗ ҫывӑрма выртнӑ тет. Амӑшӗ кунӗпе пӗр канмасӑр ӗҫленӗ тет. Хӗрин ҫывӑрасси килмест тет, тек йурласа выртаӗ тет. Амӑшӗ: хӗрӗм, ан йурла, манӑн ҫывӑрас килет, тесе калаӗ тет. Хӗрӗ амӑшне итлемест тет. Тата хытӑрах йурла пуҫларӗ тет. Вара амӑшӗ хӗрне пӑлтӑра хупса хуҫӗ тет.
—Сана кунта йурлама аван пулӗ, терӗ тет амӑшӗ.

**Кӗркунне** пулнӑ, вӑрманта сивӗ ҫил уласа вӗрсе тӑнӑ. Сархайнӑ ҫулҫӑсем йывӑҫ ҫинҫен ӳксе, ҫилпе ҫаврӑнса, вӗҫсе ҫӳренӗ. Вӗҫен-кайӑксем карти картипе пухӑнса, ӑшӑ йенелле вӗҫсе кайнӑ Ҫук ҫынсем кӑмакисене хутма вӑрманта шанкӑ пуҫтарса ҫӳренӗ. Пӗҫӗкҫӗ Наҫтукӑн амӑшӗ ҫирлӗ выртнӑ, вӑл пӳртрен те тухайман. Наҫтукӑн ашшӗ пулман. Ҫавӑнпа амӑшӗ ҫирлӗ ҫухне хӗрӗ ахалҫ ларман. Куллен вӑл ирхине вӑрмана кайса, пӑртакҫӑ шанкӑ пуҫтарнӑ та, килне илсе таврӑннӑ; унтан пӑртак кансан, татах шанкӑ пуҫтарма кайнӑ. Пӗҫӗкҫӗ Наҫтук ҫапла тӑрӑшнипе пӳртре йаланах ӑшӑ тӑнӑ.

**Пӗр** ватӑ ҫын шыв хӗрринҫе пурӑннӑ. Унӑн икӗ аҫи пулнӑ: пӗри Петӗр йатлӑ, тепӗри Кӗркури йатлӑ пулнӑ. Кӗркурийӗ ҫиҫҫӗре пулнӑ, Петӗрӗ тӑваттӑра пулнӑ. Пӗрре ирех Кӗркурипе Петӗр ҫырмана аннӑ та, кимӗ ҫине ларса кайнӑ. Петӗр кӗреҫисемпе ишсе пынӑ, Кӗркури кимӗ хӳрине тытнӑ. Вӗсем пулӑ шакӗ шыранӑ. Аҫасем шакне аслашшӗ ӑҫта хунине пӗлмен. Вӗсем шыв тӑрӑх инҫе ишсе кайнӑ. Кайсан кайсан, шакне тупнӑ. Шакӗнҫи пуллисене илнӗ те, килне таврӑннӑ; таврӑнсан, пуллисене аслашшӗне панӑ.

**Пӗрре** аҫасем анкартне кайнӑ. Унта вӗсем кашкӑрла вы-

ђама тытӑннӑ. Михаља кашкӑрӗ пулнӑ. Микулайпа Настук сурӑхӗсем пулнӑ. Михаљи кашта тӑрӑх улӑм ури çине улӑхса кайнӑ. Микулайпа Настук айалта кашкӑра кӗтсе тӑнӑ. Вӗсем айалта кашкӑра кӗтнӗ кӗтнӗ те, кӗтсе ывӑнсан, кӑшкӑра пуçланӑ. Михаља кӑшкӑрсан та пыман. Унтан вӗсем Михаљана шырама тытӑннӑ. Темӗн ђухлӗ шыраса та, тупайман ӑна. Вара вӗсем килне кайнӑ. Кӑшт тӑрсан, Михаљана шырама амӑшӗ те пынӑ.—Михаља! Михаља! тесе кӑшкӑрнӑ вӑл. Пӗр сас-ђӗвӗ те пулман. Амӑшӗ вӑрмана, хире кайса шыранӑ.—Михаља! Михаља! тесе кӑшкӑрса çӳренӗ амӑшӗ. Михаљи: епӗ кунта, епӗ çывӑрнӑђӗ! тесе лараҥ тет улӑм ури тӑрринђе.

**Пӗрре** кушак çисе тӑраҥ. Ун патне Хураçка пыђӗ тӑђӗ. Кушак Хураçкана сӑмсинђен ҥађӗ илђӗ. Хураçки кушака хӳререн ҥарса илђӗ. Кушак Хураçкана куçӗнђен ђавса илђӗ. Хураçка кушака мӑйӗнђен ҥарса илђӗ. Çав вӑхӑтра аппа шыв ӑсса иргетђӗ. Вӑл ђарӑнђӗ те, кушакпа ҥытта шывпа ђаш! тутарђӗ. Тин тӳпелешме ђарӑнђӗç.

**Иванпа Петӗр** хут çӗлен тума шухӑшланӑ. Иван Петӗре калаҥ: Петӗр, есӗ çилӗм хатӗрле, епӗ хӑҥӑсем шырӑп, тет. Вӗсем ђасах çилӗмпе хӑҥӑ тупса хунӑ. Тепӗр кунне вӗсенӗн хут çӗлен пулса та тӑнӑ. Вӗсем хут çӗлене ҥама кайнӑ. Антах çил пулман та, хут çӗлен кӑшт та кайман. Вара Петӗрпе Иван хире кайнӑ. Хирте те çил пулман. Темӗн ђухлӗ ђупса асапласан та, хут çӗлен çӳлелле кайман. Вара Петӗрӗ: вӗр Иван! вӗр! тесе кӑшкӑра пуçланӑ. Иван мӗн пур вӑҥӗпе вӗрнӗ. Хут çӗлен çапах çӳлелле çӗкленмен, çӗре персе ӳкнӗ.

**Манӑн** Петӗр ҥатлӑ ҥулташ вӗр-çӗнӗ пушӑ ҥаврӗ. Çав пушипе куракана пӗрне çапатђӗ. Пӗрре çапла çисе ларакан ҥӑмӑкӗ патне пыђӗ те, пушипе шарт! тутарђӗ пуçӗнђен. Ҥӑмӑкӗ ҥӗре пуçларӗ. Амӑшӗ илтрӗ те, ђупса та пыђӗ. Петӗртен пушине тутса илђӗ те, хӑйне çаптара пуçларӗ: ан тив çынна! ан тив çынна! ак сана! терӗ. Çапа пӗлмен пушӑ хӑйне çаврӑнса тивнӗ тесе çавӑнпа каланӑ та çав.

**Çуркунне** пулнӑ. Шывсем ҥуха пуçланӑ. Ађасем турпас тӑтӑкӗсем илнӗ те, вӗсенђен кимӗ туса шыва ҥанӑ. Кимми шыва май ҥухса кайнӑ. Ађасем нимӗне пӑхмасӑр ун хыççӑн кӑшкӑрса, ђупса пынӑ. Вӗсем çапла ђупса пынӑ ђух, шывлӑ лупашкана кӗнӗ ӳкнӗ.

**Икӗ çын** канав алтнӑ тет. Вӗсем виçӗ кун ӗçленӗ тет.

Виçӗ кун ӗçлесе, килне виçӗ тенкӗ илсе таврӑннӑ тет. Вӗсем виçӗ тенке уйӑраймасӑр виçӗ кун тавлашрӗç тет. Апла тавлашса тӑриҫҫен, тата виçӗ кун ӗçлес мӗн вӗсем.

**Аҫасем** вӑрмана кӑмпана кайнӑ. Вӗсем унта пӗрикӗсене туллийех тултарнӑ. Аҫасем уçланка тухнӑ та, утӑ купи çине ларса, кӑмписене сӑва пуçланӑ. Йывӑç тӗмӗсем хыçӗнҫе пӗр çын кашкӑрла уласа йанӑ. Аҫасем кӑмписене пӑрахнӑ та, киле ҫупа панӑ.

**Епир** пӗрре çерем çинҫе вӑрлӑх çапатпӑр. Сисмен те хӑмӑр, пирӗн тӗле пӗлӗт хупланӑ илнӗ, çанталӑк сӗм-тӗттем пулҫӗ тӑҫӗ. Унҫҫен те пулмарӗ, çил-тӑвӑл пирӗн сарӑма тырри-мӗнӗпе айӗн-çийӗн çавӑра пуçларӗ. Нимӗн тӑва пӗлместпӗр. Хӑшӗ аллине кӗреçе тытнӑ та, улӑмсене тӗрткелесе çӳрет, хӑшӗ сенӗк илнӗ те, тырӑ хырса тӑрат. Пирӗнпе пӗрле тырӑ çапакан кӳршӗ лашине утланнӑ та, пирӗн тавра сиккипе кустарса çӳрет: тӗнҫе пӗтет! тӗнҫе пӗтет! ҫӗлӗмӗм ӑçта-ши? тет хӑй. Тӑвӑл ҫарӑнсан, хамӑртан хамӑр кулатпӑр. Аптӑранӑ кӑвакал кутӑн ҫӑмнӑ тет: çавӑн пек пулҫӗ.

**Йӑлӑнтарни.** Пирӗн атте пасара каймассерен пирӗн валли кулаç илсе таврӑнатҫӗ. Пӗрре çапла пасартан таврӑнсасӑн, атте пурсӑмӑра та пӗрер татӑк кулаç валеçсе паҫӗ. Мана ыттисенҫен сахал панӑ пек туйӑнҫӗ. Епӗ кулаçа илмесӗр, йӑлӑнтарса, пӗр кӗтессе кайса лартӑм.

Атте ман йенелле çаврӑнса пӑхрӗ те: мӗншӗн илместӗн тата кулаçна? терӗ. Епӗ пӗр ҫӗнмесӗр ларатӑп. Атте мана панӑ кулаç татӑкне илҫӗ те, йӑмӑксене валеçсе паҫӗ: мейӗр, çийӗр Иван татӑкне, вӑл кӗтесре йӑлӑнтарса лартӑр-ха! терӗ. Йӑмӑксем ман татӑка çисе те йаҫӗç. Кайран ыйтасҫӗ,—кулаç çук. Çын аллинҫи кукӑљ пысӑккӑн курӑнат тесе ахаљ каламан çав.

## Микулай.

—Микулай, авӑн çапма кай!—Вар ыратат.—Микулай, пӑтӑ çиме лар!—Пысӑк кашӑкӑм ӑçта-ши?

## Хур ури.

—Ах, хур ури тутлӑ-çке!—Есӗ çисе пӑхнӑ-и мӗн?—Çийессе çимен те, пирӗн кукка улпут çинине курнӑ.

## Ӗ ç ҫ е н.

—Анне, ыран мана иртерех тӑрат.—Мӗншӗн апла?—Ҫӗллӗме çисе йараймарӑм та, ыран ирхине çисе йарас тетӗп.

## Тăри.

Айакран, ăшă йенҫен тăри вĕҫсе килнĕ. Вăл хăйне йăва ҫавăрнă та, ҫĕпĕсем кăларнă. Ҫĕпписемпе пурăнма ăна пит лайăх пулнă, ҫĕппись ене те амăшĕ пур ҫух аван пулнă.

Пĕр аҫа серепе хурса тăрийе тытнă та, килне илсе кайнă. Тăри пÿртре ĕлĕкхи пурăнăҫĕшĕн те, ҫĕппись емшĕн те пит хуйхăрса пурăннă.

Аҫа тăрийе шыв ĕҫтерме маннă та, тăри вилнĕ. Амăшĕсĕр пуҫне ҫĕппись ем те хирте вилсе пĕтнĕ.

Мĕншĕн тытрĕ-ши тăрийе вăл аҫа!

## Ҫĕкеҫ.

Ҫĕкеҫ, ҫĕкеҫ-ҫĕкеҫĕ, пĕр те канма пĕлмерĕ: кунĕпе вĕҫсе ҫÿрерĕ, улăм пĕрҫи пуҫтарҫĕ, тăмпа шăлса ҫыпăҫтарҫĕ, хăйне йăва ҫавăрҫĕ. Хăйне йăва ҫавăрҫĕ, ҫăмарта тума тытăнҫĕ; ҫамартасем турĕ те, йăви ҫинҫен анмасĕ те, ҫĕп тухасса кĕтет вăл. Акă ҫĕпĕ кăларҫĕ: ҫĕппись ем ун ҫăйлатаҫҫĕ, ҫиме апат ыйтаҫҫĕ. Ҫĕкеҫ-ҫĕкеҫĕ, кÿнĕпе вĕҫсе ҫÿрет вăл, пĕр те канма пĕлмест вăл: шăна-пăван пуҫтарать, ҫĕппись ене тăрантарать.

## Ҫултаlăк хушши.

Шурă йур ирелет,
Ҫеҫен хир ҫĕрĕлет.
Йешĕл курăк ÿсет...
Вăл хăҫан пулать-ши?

Хĕвел хытă хĕртет,
Ăшă ҫил вĕркелет,
Сар ыраш ҫитĕнет...
Вăл хăҫан пулать-ши?

Хир илемĕ кайать,
Сĕм вăрман ҫаралать,
Пĕр май ҫумăр ҫăвать.
Вăл хăҫан пулать-ши?

Хирсенҫе йур анҫах,
Ҫырмара пăр анҫах,
Сивĕтет аванах...
Вăл хăҫан пулать-ши?

## Ҫарăк.

Паљук пиҫҫе ҫарăк акнă тет. Ҫарăкĕ темĕн пысăкĕш ÿснĕ тет. Паљук пиҫҫе ҫарăкне кăларма тытăнҫĕ тет. Туртать туртать тет, туртса кăлараймасть тет.

Ҫĕнҫĕ тет ку арăмне. Арăмĕ Паљук пиҫҫерен, Паљук пиҫҫи ҫарăкран тытнă тет. Туртаҫҫĕ туртаҫҫĕ тет, туртса кăлараймаҫҫĕ тет.

Арăмĕ ҫĕнҫĕ тет хăй хĕрне. Хĕрĕ амăшĕнҫен, амăшĕ ашшĕнҫен, ашшĕ ҫарăкран тытнă тет. Туртаҫҫĕ туртаҫҫĕ тет, туртса кăлараймаҫҫĕ тет.

Ҫӗнҫӗ тет хӗрӗ хӑйсен анҫӑкне. Анҫӑкӗ хӗртен, хӗрӗ амӑшӗнҫен, амӑшӗ аппӗнҫен, аппӗ ҫарӑкран тытнӑ тет. Туртаҫҫӗ туртаҫҫӗ тет, туртса кӑлараймаҫҫӗ тет.

Анҫӑкӗ ҫӗнҫӗ тет кушакне. Кушакӗ анҫӑкран, анҫӑкӗ хӗртен, хӗрӗ ӑмӑшӗнҫен, амӑшӗ аппӗнҫен, аппӗ ҫарӑкран тытнӑ тет. Туртаҫҫӗ туртаҫҫӗ тет, туртса кӑлараймаҫҫӗ тет.

Ҫӗнҫӗ тет кушакӗ шӑшийе. Шӑшийӗ кушакран, кушакӗ анҫӑкран, анҫӑкӗ хӗртен, хӗрӗ амӑшӗнҫен, амӑшӗ аппӗнҫен, аппӗ ҫарӑкран тытнӑ тет. Туртрӗҫ туртрӗҫ тет те, туртрӗҫ кӑларҫӗҫ тет.

## Сармантей.

Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет, ӑна шӑши пынӑ тет те, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет. Сармантей те йӗрет тет, сарӑ ҫӑххи те какалай тет. Хапхи калай: манӑн та уҫӑлса хупӑнас, тет.

Анай тет пӗр вӑкӑр шыва куллен кун.—Хапха есӗ мӗншӗн уҫӑлса хупӑнатӑн? тесе ыйтай тет.—Уҫӑлса хупӑнмасӑр, тесе калай тет: Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ, ӑна шӑши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей те йӗрет, сарӑ ҫӑххи те какалай, тет. Вӑкӑр калай: еппин манӑн та мӗкӗрсе анас пулӗ, тет.

Мӗкӗрсе анай тет шыв хӗррине. Шыв калай: мӗншӗн, вӑкӑр, мӗкӗретӗн? тет.—Мӗкӗрмесӗр, тет: Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет; Сармантей те йӗрет тет, сарӑ ҫӑххи те какалай тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнай тет. Шыв калай: манӑн та хумханас еппин, тет.

Пӗр ҫӗнӗ-ҫын шыв ӑсма анай.—Шыв, есӗ мӗншӗн хумханатӑн? тет.—Хумханмасӑр, тет: Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет; Сармантей те йӗрет тет, сарӑ ҫӑххи те какалай тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнай тет, вӑкӑр та мӗкӗрет тет. Ҫӗнӗ-ҫын калай: манӑн та пӗр витрене ҫапса ҫӗмӗрес, тет. Ҫапса ҫӗмӗрет витрине, таврӑнай килне.

Хуҫамӑшӗ ҫуста ҫарай тет.—Кин, мӗншӗн хӑрах витрепе анҫах ӑсса килтӗн? тет.—Хӑрах витрепе анҫах кӳмесӗр, тет: Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет; Сармантей те йӗрет тет, сарӑ ҫӑххи те какалай тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнай тет, вӑкӑр та

мӗкӗрет тет, шыв та хумханат̆, тет. Хуҭамӑшӗ калат̆: манӑн та ҭустана кӑларса ывӑтас еппин, тет. Кӑларса ывӑтат̆ тет ҭустине.

Ывӑлӗ кайнӑ вӑрмана. Таврӑнат̆ вӑрмантан. Ывӑлӗ калат̆: мӗншӗн йашка пӗҫермерӗр? тет. Амӑшӗ калат̆: Сармантейӗн сарӑ ҭаххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ; Сармантей те йӗрет, сарӑ ҭаххи те какалат̆, хапхи те уҫӑлса хупӑнат̆, вӑкӑр та мӗкӗрсе анат̆, шыв та хумханат̆, ҫӗнӗ ҫын та хӑрах витрине ҫапса ҫӗмӗрнӗ, тет. Ывӑлӗ калат̆: манӑн та хӑрах атта кӑларса ывӑтас, тет. Вӑл та кӑларса ывӑтрӗ тет. Пӗтрӗ.

---

# РУССКІЙ ОТДЕЛЪ.

## РУССКАЯ АЗБУКА.

**Аа, Бб, Вв, Гг, Дд, Ее, Жж, Зз, Ии, Іі, Кк, Лл, Мм, Нн, Оо, Пп, Рр, Сс, Тт, Уу, Фф, Хх, Цц, Чч, Шш, Щщ, Ъъ, Ыы, Ьь, Ээ, Юю, Яя, Ѳѳ, Йй.**

1) а, и, ы, у, в, л, м, н, р, й.
2) і, е, о, я, ю, ъ, ь, э.
3) п, б; т, д; к, г, х; щ, ж; с, з.
4) ц, ч, щ, ф, ѳ.
5) ѣ.

1) а, и, ы, у, в, л, м, н, р, й.

*А*нна, *А*лла, *И*нна, Ир*и*на, Вар*у*ла, В*и*ла, Вав*и*ла, Варн*а*ва Варв*а*ра, Л*а*вра, М*и*на, Мар*и*на, Н*и*на, Р*и*мма, Рай, Май, Выр*ы* Выл*а*.

2) і, е, о, я, ю, ъ, ь, э.

і. *(=и)*. І*у*лій, *А*рій, *У*рій, Ил*а*рій.
е. *(=йе)*. *Е*ва, *Е*вва, Ел*е*на, Евм*е*ній, Ирин*е*й, Вал*е*рій.
о. *О*мврій, Ной, І*о*на, Ермол*а*й, Ал*о*ній, Н*о*нна.
я. *(=йа)*. Ил*і*я, І*у*нія, І*у*лія, Мар*і*я, Мел*а*нія, Вал*е*рія, Ил*а*рія, Ан*а*нія, Евл*а*лія, Іулі*а*нія.
ю. *(=йу)*. *Ю*лій, *Ю*лія.
ъ. Нилъ, Лавръ, Мавръ, На*у*мъ, Рув*и*мъ, Ману*и*лъ, Ав*и*въ.

Авра*а*мъ, Арі*а*нъ, Іулі*а*нъ, Илі*а*нъ, Виві*а*нъ, Марі*а*нъ, Урі*и*лъ, Евв*у*лъ, Ел*и*мъ, Веніам*и*нъ, Валері*а*нъ, Оръ, Мир*о*нъ, Ром*а*нъ, Віан*о*ръ, Іер*о*нъ, І*о*аннъ, Іерон*и*мъ, Аар*о*нъ.

**Ь**. Авель, Янв*а*рь, І*ю*нь, І*ю*ль.

**Э**. (=*е*). Эм*и*лія, Эрив*а*нь, Э*о*ль, Эн*е*й.

### 3) п, б; т, д; к, г, х, ш, ж; с, з.

**п. б.** Па, пе, пи, по, пу, пы, пя; ба, бе, би, бу, бы, бя; па, ба, пе, бе, пи, би, по, бо, пу, бу, пы, бы, пя, бя; папа, папе, папи, папо, папу, папы, попа, попи, попы, пупа, пупы; баба, бабу, бабы, боби, бобу, бобы, бубе; поба, побе, поби, побу, побы.

**т. д.** Та, те, ти, то, ту, ты, тя; тата, титу, тита; де, ди, до, дя; деда, деду, деды, додо, доду, дуда, дуди, дядя, дяде, дядю; та, да, те, де, ти, ди, то, до, ту, ду, ты, ды, те, де, тя, дя; туга, туды, туде, дата, дате, дати, дату, даты, дета, дита, диту, диты, дитя, дети, дяде.

**п. б. т, д.** Пита, пито, питу, питы, пота, поте, пото, поту, пута, пути, путы, пыта, пыту, пята, пяти, тепе, типа, типу, топа, топо, тупа, тупу, тупо; беда, беде, беды, беду, бода, буда, буде, буди, буду, даба, дабы, добы, доба, добу, доби, дуба, дубы, дыбу, дыбы; пада, паде, пади, паду, педа, пода, поди, подо, поду, поды, пуда, пуды, пяти; допа, допе, допу, допы, допи, допя, дупа, дупе; бата, бате, бати, бато, бату, баты, батю, батя, бита, бите, биту, биты, бота, боту, боты, буту, буты, буте, быти, быту, таба, табу, тебе, тыбы.

**к, г, х.** Ка, ке, ки, ко, ку, кака, каки, како, каку, куку, га, ге, ги, го, гу, гага, гаги, гаго, гагу, гига, гиге, гигу, гуга, гугу, гика, гака, гаку, гука, гоки, гику, гике; ха, хе, хи, хо, ху, киха, хоха, куху, кака, хека, хика, хока, хука, хуку, кага, гака, хаха.

**п, б; т, д; к, г, х.** Паки, пика, пики, пику, поко, пока, поку, капа, капе, капи, кипа, кипы, копа, копу, копо, купа, купи; така, таки, таку, тика, токо, току, туки, кате, кати, каты, кату, кита, киту, киты, кота, коту, коты, кута, куты; бака, баки, буку, бека, беки, беке, беку, бика, бока, боки, боку, бука, буку, быка, быки, быку, бяка, баку, кабы, кубу, кубы; дика, дики, дику, дока, доку, дыка, дыки, кида, киды, куда, дага, до-

га, догу, дуга, дуги, дугу, дуге, гада, гаду, гады, года, году, годы, гуда, гуду, гуды; баго, беги, бегу, бога, бого, гиба, гибе, гоба, губе, гоба, гобу, губа, губи, губу, губы; пега, пегу, пига, пога, погу, пуга, пуги; гапа, гапи, гапу, гипа, гопа, гипу, гопы; тата, тига, тога, тогу, туга, туги, тягу, тяга, гати, гату, гаты, гета, гиты, гота, готе, готи, гото, готя, гута, гуты, гуто; паха, поха, похе, похи, похо, поху, пуха, пуху, пыха, пухи, баха, бахи, баху, бехи, буха, буху, бухи, туха, тухи, тихо, тиху, тиха, тихи, хата, хату, хаты, хате, хити, хота, хоте, хотя; духа, духи, духу, дыха, дыху, хода, ходи, ходу, ходы, худа, худу худы.

**ш, ж; п, б; т, д; к, г, х.** Ша, ше, ши, шо, шу, шаша, шиша, шише, шашу, шашо, шаше; жа, же, жи, жо, жу, жижа, жижу, жиже; паша, паши, пашу, пиши, пишу, поша, поши, пошу, шипа, шипи, шипу, шипы; шиба, шипи, шибу, шуба, шубы, шубе, таша, ташу, тешу, теши, тише, тиши, туша, туши, шата, шату, шаты, шута, шуту; даша, даши, дашу, душа, душу, души, дыша, дыши, дышу; каша, каши, кашу, каше, коша, коше, кушу, шака, шаки, шаку, шика, шику; гаша, гаше, гашу, гиша, гоша, гошу, гуша, гуши, шага, шаги, шагу, шига, шуга; шаха, шиха, шуху, пажа, пожа, пожи, пожу, пужа, пыжи, пыжу; бежа, бежи, бижа, божа, боже, божи, божу, бужу, жаба, шабу, жабе; тажа, тажу, тоже, тужа, тужу, тужи, тяжи, жато, жату, жаты, жито, жите, жити, жита, житу; даже, дажу, дежа, дужи, дожи, жада, жида, жиду, жиды; кажи, кажу, каже, кожа, кожи, кожу; жака, жаки, жука, жуку, жуки, гажу. гожа, гожу, гужа, гужи, гужу, гуже, гижа, хижи, хожа, хоже, хожи, хуже, жиха, жихи, жиху, жуха жуху.

**с, з; п, б: т, д; к, г, х; ш, ж.** Са, се, си, со, су, сы. сю, ся, соса, соси, сосу, сосы; за зе, зи, зо, зу, зы, зю, зя, заза зазе, зази, зазю, зазя; саза, сиза, сизу, сизы, заса, засе, заси, засо, засу, засы; паси, пасу, писа, писы, поса посе, поси, посу, посы, сипа, сипу, сыпа, сыпи, супа, супу, супы; баса, басу, басы, бесу, бесы, боса, босо, босу, буса, бусы, себе, сиба, соба, собе, соби, собо, собу, собы, сяба; теса, тесу, тесе, тесы, сати, сота, соту, соты, сыта, сыты, сысу, сята, сада, сади, садо, саду, сады, садя, сода, соду, суди, суду, суды; коса, косу, киса, кису, коси, косе, косы, куса, кусы, кусо, куси, сака, саки, саку, сока, соки, соку, суку; каза, казу, казы,

коза, козу, кози, козе, зака, заки, зако, заку, зыка, зыку; гасе, гасы, гаси, гасу, госу, гуси гусы, гусе, гусю; газе, газу, газы, гуза, гузу, зага, заге, заги, заго, загу, зига, зигу; соха, сохи, сохе, суха, сухе, сухо, сыхо; сажа, саже, сажи, сажу, сижу, сожа, сужу; паза, пазу, пазы, поза пози, позу, позы, позя, пуза, запа, запе, запи, запо, запу, запы; заба, заби, забе, забо, забу, зобу, зобы, зуба, зубе зубы, зыба, зыби, зяби, зяби, заба, таза, тазу, тазы, туза, тузе; зата, зате, зати, зату, заты, затю, затя, зета, зятю, зятя; доза, дозу, де, дозя, зада, заде, зади, задо, заду, зады, зида, зуда, зуди, зуде; заха, захи, заху, захо, хозя; заша, заше, заши, зашу, зиша; зажа, зажи, зажу, зажо, жазы.

Пра, пре, при, про, пру, пры, пря, прю; кра, кре, кри, кро, кру, кры, кря, крю; тра, тре, три, тро, тру, тры, тря, трю; шра, шре, шри, шро, шру, шры, шря; сра, сре, сри, сро, сру, сры, сря, срю; хра, хре, хри, хро, хру, хры, хря, хрю.

Бра, бре, бри, бро, бру, бры, бря, брю; гра, гре, гри, гро, гру, гры, гря; дра, дре, дри, дро, дру, дры, дря, дрю; жра, жре, жри, жро, жру, жры, жря, жрю; зра, зре, зро, зру, зры, зря, зрю.

Тла, тли, тле, тло, тлу, тлы, тля, тлю, дла, дле, дли, дло, длу, длы, для, длю.

Впа, впе, впи, впо, впу, впы, впя; вса, все, вси, всо, всу, всы, вся, всю, вта, вте, вти, вто, вту, вты, втя, втю; вша, вше, вши, вшо, вшу.

### 5) ц, ч, щ, ф, ѳ.

. Ца, це, ци, цо, цу, цы; ац, ец, иц, оц, уц; цка, цку, цки; ча, че, чи, чо, чу; чра, чре, чри, чро, чру, чка, чки, чке, чко, чку; чла, чле, чли, члу; чта, чту, чти, чте; вча, вче, вчи, вчо, вчу; ща, ще, щи, шу; тащи, тащу, теща, тещи, тоща, тощу, фа, фе, фи, фо, фу, фы, фя, фю; ѳа, ѳе, ѳи, ѳо, ѳу; ѳра, ѳри.

### 5) ё (=*йо*).

Вё, лё, мё, нё, рё, пё, бё, тё, дё, зё, фё, ѳё. Ёжъ, ёршъ, ёлка, моё, твоё, своё, вёсла, лёдъ, мёдъ, гнётъ, рёвъ, пёсъ, тёсъ, дёготь, дёргать. Ѳёкла, овёсъ, орёлъ, осёлъ, дёрнъ, хорёкъ, конёкъ, Пётръ, Семёнъ, извёстка, бичёвка, верёвка, берёзка, мёрз-

лый, лёгкій, тёртый, лепёшка, перепёлка, ребёнокъ, телёнокъ, небо, нёбо.

Стра, стре, стро, стру, вста, всту, всду, взды, вздо, вско, вскру, встре, встря, взгро, вздра, вздро.

Страдать, страда, страхъ, стрекоза, стрельба, стремглавъ, строгать, стружка, вставить, вступить, вслухъ, вслушаться, вздымать, вздыхать, вздорожать, вздохнуть, вскочить, всколебаться, вскопать, вскормить, вскружиться, встревожить, взгроможденіе, взгромоздить, вздрагиваніе, вздрогнуть.

Ай, ей, ій, ой, уй, ый, юй, яй.

Божій, вечный, всеблагій, всеведущій, всеправедный, всемогущій, вездесущій, неизменяемый, вседовольный, всеблаженный, щедрый, милостивый, долготерпеливый, сильный, святый. Вставай, взирай, взимай, бей, пей, дорогой, здравствуй, клюй, исполняй.

Воззвалъ, падаль, комаръ, букварь, дикарь, отказъ, приказъ, мазь, вздремнулъ, куль, поклонъ, посконь, стонъ, Тамбовъ, морковь, свекровь.

Се, съе, ве, въе, обя, объя, обе, объе, сю, съю, изя, изъя, поде, подъе, вя, вья, ре, рье, си, сьи, тю, тью, те, тье, мя, мья, дя, дья, тя, тья, вю, вью, съездъ, съехать, въехать, объявить, объездъ, съютить, изъянъ, подъездъ, подъёмъ, вьявь, вьюнъ, вьюшка, вьюга, бельё, ружьё, копьё, скамья, бадья, братья, листья, ульи, воробьи.

Векъ, венокъ, въедаться, въезжать; въ книгу, въ училище, въ классъ, въ улей, въ амбаръ; въ бане, въ дороге, въ избе, въ изгнаніи, въ стопе, въ крепости, въ стычке.

Вс, воз, взо, вы, низ, низо, на пере, пра, пре, раз, разо, роз, су.

Взволновать, взрыть, взвыть, возвеселить, возмужать, возблагодарить. Взорвать, взойти, взобраться. Выбраться, выдернуть, выздороветь, выгладить, выбелить. Низложить, низводить, нисвергнуть, низойти, перевозить, передавить, переговорить, переспорить, переведаться, ночевавать. Превозносить, преградить, превышать, превратить. Разделить, разгромить, развеселить. Разогреть, разодрать. Розговенье. Суглинокъ, сугробъ, сугробикъ, сумракъ, суставъ. Суглинистый, сугробистый,

сумрачный. Пасека, пасынокъ, падчерица. Прадедъ, прабабушка, правнукъ, праправнукъ.

Баба, папа, бабочка, папочка, трубы, трупы, бары, пары, бобы, попы, бухъ, пухъ, балка, палка, белъ, пелъ, блоха, плоха, обора, опора, бить, пить, люблю, луплю, бочка, почка, выбить, выпить, выбросить, выпросить, побрать, попрать, заборъ, запоръ, столбы, столпы, пороги, пороки, густъ, кустъ, гость, кость, грива, крива, голосъ, колосъ, груба, крупа, гладь, кладь, сгинуть, скинуть, нога, сноха, голодъ, холодъ, гогочетъ, хохочетъ, дуги, духи, слуги, слухи, гвоздь, хвостъ, дачка, тачка, пойди, пойти, дядя, тятя, плоды, плоты, доля, Толя, домъ, томъ, дымъ, тынъ, дочка, точка, дуло, Тула, доска, тоска, дверь, Тверь, дело, тело, задъ, садъ, зубъ, супъ, зало, сало, полозья, колосья, коза, коса, заборъ, соборъ, зевъ, севъ, жаръ, шаръ, жестокъ, шестокъ, жаль, шаль, жарить, шарить, жить, шить, жалость, шалость, жило, шило, сажа, Саша, тужить, тушить, жесть, шесть, жутко, шутка, годъ, ходъ, глазъ, классъ, день, тень, дворецъ, Творецъ.

Пылъ, пыль, голъ, голь, гладъ, гладь, битъ, бить, сталъ, сталь, далъ, даль, долъ, вдоль, тронъ, тронь, гнилъ, гниль, жаръ, жарь, шестъ, шесть, целъ, цель, паръ, парь, снятъ, снять, вонъ, вонь, елъ, ель, цепъ, цепь, плотъ, плоть, лезъ, лезь, мелъ, мёлъ, мель, кладъ, кладь, братъ, брать, съ глазъ, сглазь, дуренъ, дурень, трусъ, трусь, уголъ, уголь, щеголъ, щеголь, весъ, весь, вихоръ, вихорь, кровъ, кровь, скарбъ, скорбь, шаръ, шарь, русъ, Русь.

---

Муха мала.
Пила тупа.
Сума худа.
Мухи малы.
Пилы тупы.
Руби дубы.
Руби липу.

Ноги босы.
Дуги туги.
Руки голы.
Гуси наши.
Куры рябы.
Суши шубу.
Буди Ваню.

Люди рады.
Щуки рыбы.
Дядя дома.
Маша дома.
Сади сады.
Тащи сани.
Купи дыню.

Мука была сыра.
Дуга была туга.
Катя была мила.

Упа—река.
Руби эти ели.
Маша ела уху.

Катя шила шубу.
Таня жила дома.
Маша била Васю.
Баба мыла руки.
Мыши пили воду.
Люди пили вино.
Паша мыла щеки.
Маше дали каши.
Рыбы было мало.
Дуне дали маку.
Маша была рада маку.
Няня была рада сыну.
Теща была рада зятю.
Дяде надо было муки.
Тете надо было муки.
Няне была баня.
Няня рада была бане.
Мама дала няне мыла.
Она была рада.
Павлу дали много квасу.
Мише нынче дали книгу.
Стали бабы песни петь.

И я хочу ухи.
Иди сюда Оля.
Мама дала ухи.
Оля ела уху.
Купи Васе юлу.
Ему надо юлу.
Купи дяде чаю.
Ему надо чаю.
Я даю Васе эту юлу, а Мише дала ту юлу.
Эта юла наша, а та юла ваша.
Сени новы. Сено сыро.
Щели малы. Репы нету.
Дети сели на сено.
Давай книгу. Читай сказку.
Седой дядя. Зимой снегъ.
Зашей шубу. Иди скорей.
Теплей стало. Воюй храбро.
Ищи рыбу. Спой песню.
Тяни сети. Купи дыню.
Рой яму. Жуй корку.

## К ĕ л ĕ с е м.

Ашшийĕн, Ывăлийĕн, Святой Сывлăшийĕн йаҫĕпе. Амин.

Ей Турă, хĕрхенсем мана, ҫылăхлă ҫынна.

Ей Турă, Турă Ывăлĕ Іисус Христос, Хăвăн ҫăн таса Анн̆упе, мĕн пур святой ҫынсем кĕл-тунипе ҫырлах пире. Амин.

Мухтав Сана, Туррăмăр, мухтав Сана.

Ей ҫӳлти Патша, Есĕ ҫуна лăплантаратăн, Есĕ тӳрĕ Сывлăш, Есĕ пур ҫĕрте те пур, Есĕ пурне те пултаратăн, пур ырăлăх та Санран тухать, ҫĕрĕлĕх те Есĕ паратăн: пирĕн ăша кĕрсе вырнаҫ, пур усалтан та тасат пире, ырă Турă, пирĕн ҫунсене ҫăл.

Святой Турă, Святой Хăватлă, Святой Вилĕмсĕр, ҫырлах пире.

Мухтав Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне халĕ те, ки-

рек хӑҫан та, ӗмӗр ӗмӗрех. Амин.

Ђӑн таса Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ, Ху йатупӑн ҫырлах пире. Ей Турӑ, ҫылӑхран тасат пире; ей Патша, епир йӗркесӗр пурӑннине каҫар; ей Святой Сывлӑш, пирӗн вӑйсӑрлӑха килсе тӳрлет.

Ей Турӑ, ҫырлах.

Ей ҫӳлти Аттемӗр, Санӑн йату хисеплентӗр, Санӑн патшалӑху килтӗр, Санӑн ирӗкӳ ҫӗр ҫинђе те ҫӳлти пекех пултӑр; пайан пурӑнмалӑх ҫӑкӑр пар пире; епир хамӑра парӑмлӑ пулнисене каҫарнӑ пек, пирӗн парӑмсене каҫар пире; ҫылӑха ан кӳрт пире, усалтан хӑтар пире.

Ей Турра ҫуратнӑ Хӗр, савӑн! Саппала Турӑ, тивлетлӗ Маріа: Есӗ пур хӗр-арӑмсенђен те мухтавлӑ, Санран Ҫурални те мухтавлӑ, Есӗ пирӗн ђунсене Ҫӑлакана ҫуратнӑ.

Ей Турӑ, етеммӳсене ҫӑл, Хӑвӑн халӑхна ырӑ курмалла ту, Христоса йуратса тӑракан ҫарӑмӑра тӑшмансене ҫӗнтерме пар, патшалӑхна Хӑвӑн хӗреҫӳ хӑвађӗпе усра.

Ей Турра ҫуратнӑ Хӗр, Сана асла хурса хисеплеме тӗрӗс тивӗҫлӗ: Есӗ пирӗн Туррӑн ӗмӗр мухтавлӑ таса Амӑшӗ, Есӗ хӗрувимсенђен те аслӑ, серафимсенђен те мухтавлӑ, Есӗ хӗр халлӗн Сӑмах Турра ҫуратнӑ, Есӗ Турӑ Амӑшӗ, Сана аслӑлатпӑр.

Ей Турӑ, пурин те куҫӗсем Сан ҫине ӗмӗтленсе пӑхаҫҫӗ; Есӗ пурне те кирлӗ вӑхӑтра ҫимӗҫ паратӑн, Хӑвӑн ырӑлӑхлӑ аллуна уҫса, пур ђуна та тӑрантаратӑн.

Тав-та-пуҫ Сана, пирӗн Турӑ Христос, Хӑвӑн ҫӗр ҫинђи ырӑлӑхупа пире тӑрантарнӑшӑн; ҫӳлти патшалӑхна та кӳртмесӗр ан хӑвар пире.

Ей Турра йурӑхлӑ пулнӑ святой (*йатне кала*), есӗ мана ђас пулӑшакан, ман ђунӑмшӑн кӗл-тӑвакан, епӗ сана тархасласа йӑлӑнатӑп, маншӑн Турра кӗл-ту.

*Святой Ефрем кӗлли.*

Ей ман ђунӑма пӑхса усракан Патша Турӑ, йулхава йересрен, хуйха ӳкесрен, пуҫа асла хывасран, кирлӗ мара калаҫасран ђарса тӑр мана. *Ӳксе пуҫҫапмалла.*

Мана, Ху ђуруна, таса шухӑш, йӑвашлӑх, тӳсӗмлӗх, йуратас кӑмӑл пар. *Ӳксе пуҫҫапмалла.*

Ей Патша Турӑ, мана хам ҫылӑхӑмсене курса тӑма пар, ҫын ђинђен айӑпласа калаҫасран ђарса тӑр: Есӗ ӗмӗр ӗмӗрех мухтавлӑ. Амин. *Ӳксе пуҫҫапмалла.*

# ОБЪЯВЛЕНІЕ.

**Въ складѣ при Симбирской чувашской учительской школѣ имѣются слѣдующія изданія на чувашскомъ языкѣ.**

| | | |
|---|---|---|
| 1. Новый Завѣтъ въ переплетѣ | | 50 к. |
| 2. Новый Завѣтъ и псалтирь въ переплетѣ | | 70 к. |
| 3. Часословъ | | 50 к. |
| 4. Молитвенникъ | | 12 к. |
| 5. Требникъ, ч. 1-я | 1 р. | 30 к. |
| 6. Требникъ, ч. 2-я | | 70 к. |
| 7. Октоихъ | 1 р. | — |
| 8. Службы Страстной седмицы. | 1 р. | 30 к. |
| 9. Сборникъ молитвъ, пѣснопѣній и чтеній изъ службъ Тріоди постной, выпускъ первый | | 75 к. |
| 10. Чинопослѣдованія литургій святыхъ Василія Великаго и Григорія Двоеслова | | 35 к. |
| 11. Великій канонъ св. Андрея Критскаго | | 5 к. |
| 12. Всенощное бдѣніе и литургія св. Іоанна Златоустаго | | 50 к. |
| 13. Послѣдованіе во святую и великую недѣлю Пасхи | | 15 к. |
| 14. Книга для духовно-нравственнаго чтенія и первоначальнаго наставленія въ Законѣ Божіемъ | | 60 к. |
| 15. Послѣдованіе молебнаго пѣнія, пѣваемаго во время бездождія | | 10 к. |
| 16. Свв. Кириллъ и Меѳодій | | 5 к. |
| 17. Сборникъ поученій, сказанныхъ въ церкви при Симбирской чувашской школѣ священникомъ В. Никифоровымъ | | 20 к. |
| 18. Евангельская исторія епископа Ѳеофана | | 45 к. |
| 19. Святѣйшій патріархъ Гермогенъ | | 5 к. |
| 20. Схимонахъ Вассіанъ | | 5 к. |
| 21. Страстная седмица въ Іерусалимѣ | | 5 к. |


**Цѣна 30 коп.**


Съ требованіями обращаться къ инспектору Симбирской чувашской учительской школы *Ивану Яковлевичу Яковлеву*.